# РАСУЛ РЗА

*Азербайджан*

## БАКУ

Мухтавлă кăйкăрсем çӳле вĕçсе
хăпарччăр,
Танксем çĕршывăмшăн тапса сикме
пултарччăр,—
Çавна шанса халь кунран-кун
Виç сменăпа ĕçлет Баку.

Пăравуссем чугун çулпа юртса кĕрлеччĕр.
Пăрахутсем шывра ишсе хумсем çĕклеччĕр, —
Çавна шанса Баку хули
Нефть ăсатать пăрăх тулли.

Кремль тӳпинчи ялав нихçан та ан шупкалтăр,
Хастарлă çамрăклăх çăл шывĕ пек шавлатăр,—
Çавна шанса пур вăйпала
Ĕçлет Баку большевикла.

Ман ывăл шарт сиксе ăш ыйхине ан таттăр,
Усал тăшман пире ĕç ĕçлеме ан чартăр,—
Çавна сĕм каç та çутă кун
Винтовкăпа сыхлать Баку.

Тискер те тӑмана — сада вӑл тӗп тӑваймӗ,
Ҫап-ҫутӑ хӗвеле хура пӗлӗт хуплаймӗ.
Баку, тем те пӗр курнӑскер,
Пӗр кисренми тӑрать, чипер.

1944